# Чулпанти "каскадерсем"

**"Чĕмĕт" кĕтесĕ**

Хисеплĕ "Чĕмĕт"! Юлашки вăхăтра эпир, сана хисеплекенсем, район хаçачĕн страницисенче сайра куратпăр. Çакăн сăлтавĕ йывăр вăхăтсем пулни пулĕ.

Эпĕ сана Чулпан ялĕнче çак кунсенче уçăлмалли "Каскадерсен" шкулĕ çинчен каласа парасшăн.

Çак ялта пурăнакан Минахмет Гибадуллин вара çак шкулăн пĕрремĕш вĕренекенĕ е тренерĕ те пулма пултарать. "Мĕншĕн?" - ыйтăр эсир.

Нумаях пулмасть 1-мĕш номерлĕ кандидат ӳсĕрле, номерсĕр мотоциклпа Нурлата килнĕ. Кунта вара вăл тӳрех пысăк креслă трюксем кăтартма тытăннă. Чугун çул переездĕнче çулпа çӳремелли мĕнпур Правилăсене хирĕçлесе ГИБДД начальникĕнчен, ВАЗ моделĕн "09" автомашинăпа пыраканскертен, иртсе кайма тытăннă.

Переездри дежурнăй çакна курсан тĕлĕнмеллипех тĕлĕннĕ. ГИБДД начальникĕ те 25 çул хушши çак ĕçе халаллаçа, çакăн пеккине пĕрремĕш хут курнăскер, мĕн пулса иртнине пĕлес тенĕ. Мотоциклне чарма ыйтнипе пирĕн "паттăр" татăклă ĕç йышăннă: чугун çулĕпе кайри урапи çинче вирхĕнсе иртнĕ. Ăна апатçимĕç комбиначĕ патĕнчи посадкăра шыранă вăхăтра пирĕн "трюкач" аэропорт патĕнче пулнă.

Анчах та кунта темĕнле çынсем килсе тухнă та ăна ОВД дежурнăй пайне илсе пынă.

Хăйĕн çакăн пек трюкĕсемшĕн "каскадер" 10 талăка тĕрмене лекнĕ тата унăн 668 тенкĕ штраф тӳлемелле пулать.

**А.КАЮМОВ,**
**Нурлатри ГРОВД ГИБДД çулпа çӳрессин надзорĕн госавтоинспекторĕ, милици капитанĕ.**

## Саламлатпăр!

**Наильпе Фирая АЗИЗОВСЕНЕ мăшăрланнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр!**

**Пурнăçăр çурхи кун пек çутă,**
**Кĕрхи кун пек пуян пултăр.**
**Çемьере татулăхпа иксĕлми телей,**
**Çирĕп сывлăх, юрату сунатпăр.**

**"Туслăх" хаçат коллективĕ.**

## Ĕлкĕрмелле

*Шăл тухтăрĕ чирлĕ çынна хытă кăшкăрма ыйтать.*

*- Нимĕн те ыратмасть-çке, - кутăнлашать лешĕ.*

*- Пурпĕрех кăшкăр. Черетре тепĕр вунă çын ларать. Çирĕм минутран вара телевизорпа футбол вăййине кăтартма пуçлаççĕ. Унта ĕлкĕрмелле манăн.*

## Чее салтак

*- Ку васкавлă пулăшу пульници-и?*

*- Çапла.*

*- Калăр-ха, ирхине ултă сехетре чан çапса ыттисене вăратаканскер йĕркеллĕ çын-и?*

*- Çук, паллах. Пăсăлнă этем вăл.*

*- Апла пулсан, халех килсе лартса кайăр ăна. Адресне çырăр-ха: Стрелоксен урамĕ, 20-мĕш çурт, салтаксен казарми.*

*** Уяв юррисем**

## Улма патăм - илмерĕн

Яшки сиксе вĕрет-çке,
Карчăк сиксе ташлать-çке.
Чĕрçи-чĕрçи панулми
Сĕтел айне кустартăм.
Мăнаккаçăм, мăнакка,
Чĕрçӳ çинче ӳстертĕн.

Улма патăм - илмерĕн,
Чĕрçӳ çине хумарăн.
Эп те пырса курмарăм,
Эс те килсе курмарăн.

Çаплах ĕмрӳ иртĕ-ха,
Çаплах ĕмрӳ иртĕ-ха.

* * *

Кăмака çинче ула кушак,
Тусăм-тус.
Салма çăрса ларать-çке,
Тусăм тус.

Салми çине сахăр янă,
Тусăм - тус.
Пĕр-ик кашăк сыпса пăх-ха,
Тусăм - тус.

**Пухса йĕркелекенĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

# Тăхăрвун саккăрмĕш çулхи шăрăх çу

Виççĕмĕш уйăх шăрăх тăрать. Кашни каç эпир синоптиксене итлетпĕр, вĕсем йăнăшасса шанатпăр. Анчах та çук çав. Çĕнĕ кун çаплах шăрăх, ТР гидрометеорологипе мониторинг центрĕ хăш-пĕр çул август уйăхĕнче те чи шăрăх кунсем пулма пултарнине аса илтереççĕ. Çапла, 1920 çулта Хусанта 38 градус, Елабугăра вара 39 градус шăрăх пулнă. Çапах та чăтмалли пĕр-икĕ кун кăна марха.

Шăрăх шыв патне хăвалать. Ваннăна, сивĕ душ айне, Хăнтăрчана, Çарăмсана, Хура тинĕсе... Финанс йывăрлăхĕсене пăхмасăрах Нурлатри вун-вун çемье кăçал Краснодар крайĕнчи пляжсене сырса илнĕ. Укçалăраххисем Вăтаçĕр тинĕсĕ патне канма каяççĕ.

"Мĕнле кантăр", - тесе ыйтсан, чиперрĕн кулаççĕ. Кунта юлакансем вара нефтяниксен уçă бассейнне аса илеççĕ. Халĕ ăна никам та пăхмасть. Çарăмсанта шыва кĕме юратакансене ыттисен тирпейсĕрлĕхĕ тĕлĕнтерет: апатланнă хыççăн юлнă çӳп-çап. Банкăсем, коробкăсем, хаçат таткисем, тата, паллах, пушă бутылкăсем...

Пирĕн сывлăхшăн мĕнле-ши шăрăх? Тĕслĕхрен, августăн иккĕмĕшĕнче урамри термометр 35С ытла ăшă кăтартнă. Больница УАЗикĕнче тата та шăрăхрахчĕ. Хулари васкавлă пулăшăва çак кун 52 хут чĕннĕ. Сакăр çынăн пысăк температура пулнă. Витĕр çиле, мороженăй ытла нумай çинине тата холодильникран ĕçнине пула. 14 çын чĕре чирĕпе аптранă, 5 - бронх астмипе, пĕрне вара "пӳре синдромĕллĕ геморроги лихорадки" диагноз лартнă. (Уйрăм гигиена правилисене яланах пурнăçламалла!).

Пушар службине илсен вара, икĕ уйăх хушшинче Нурлатри ПЧ ĕçченĕсем 50 хут ытла тревогăпа тухса кайнă, ытларах кăнтăр кунĕнче. Çӳп-çап çуннин 13 тĕслĕхне палăртнă, 12 - мунчапа гараж, 5 - çурт. Мунча хутнă чухне асăрханусăр пулни, шăратса сыпăçтармалли ĕçсене пурнăçланă чухне тирпейсĕр пулни, электроприборсемпе усă курмалли правилăсене пăсни пушар сăлтавĕсем пулса тăнă. Вăрмансенчи пушарсем - Раççейре пушар тухас хăрушлăх пуррине палăртнă вăхăтра 17 пин пушар пулнă - пирĕн патра палăртман. Хамăрăн симĕс пуянлăха малашне те упрасчĕ.

Шăрăхра пурне те йывăр. Комбайнерсене, строительсене, нефтяниксене, çул-йĕр тăвакансене, ытти профессисемпе ĕçлекенсене тата ... пĕчĕк кухньăра хĕлле валли хатĕрленсе банкăсемпе аппаланакан кил хуçи хĕрарăмĕсене пуринчен ытла йывăр.

Çынсене кĕркунне çитесси, мороженăй тата уçăлтаракан шывсем лăплантараççĕ. Киосксен хуçисем хăйсен коммерци вăрттăнлăхĕсене уçмаççĕ, çапах мороженăй нумай тата кăмăлпах илнине палăртаççĕ. Нурлата ăна Çыранçи Чаллăран тата Самартан илсе килеççĕ - темлине те - иçĕм çырлиллĕ пломбир, крем-брюле, мăйăрли, улма-çырлалли, эскимо, "Мишутка", "Каприз", "Рожок", "Люкс" тата ытти те. Çапах та чи тутли ногинское мороженăй теççĕ. Е акă карамеллĕ "Даша". Ĕçмелли сĕткенсене илес пулсан, "Фанта", "Кола" аслисене йăлăхтарса çитернĕ, вĕсем лимон таткисемпе сивĕтнĕ чей, сăра тата кукамайсен рецепчĕпе хатĕрленĕ çăкăр квасне ытларах килĕштереççĕ.



Сăмах май, врачсем ахаль шыва нумай ĕçме сĕнмеççĕ - вăл чĕрепе пӳрешĕн сиенлĕ.

Çăвăн ытлашши шăрăх çанталăкне мĕнле чăтатăр тесе ыйтни çине пирĕн вулакансем хăйсен хушамачĕсене пĕлтермесĕр хураслаççĕ.

**Валентина Михайловна, 47 çул.**

- Эпĕ - отпускра. Иртен тытăнса каçчен вентилятор ĕçлени хăтарать. Шăнса пăсăлма та пулать тенине илтнĕ.

**Гузель, служащи.**

- Ирхине, кăнтăрла, каçхине икĕ хутчен шыва кĕретĕп. Ĕç пӳлĕмĕнче вара çав тери шăрăх...

**В. строитель.**

- Ыйтатăр та. Куратăр-и, шăрши пек йĕп-йĕпе.

... Тĕлĕнетĕп çынсенчен. Пире яланах тем килĕшмест. Çулла шăрăх кансĕрлет, хĕлле шартлама сивĕ...

**Т.НАЗАРОВА.**

## Пĕлтерӳсем

**"Диана" киоска (типографие хирĕç) июлĕн 31-мĕшĕнче каçхине çаратнă пирки мĕн те пулин пĕлекенсене 2-28-32 номерпе е Гиматдинов урамĕнчи 51-мĕш çуртри 4-мĕш хваттере пĕлтерме ыйтатпăр. Кам пĕлтернине каламасса тата парне пуласса шантаратпăр.**

* * *

**ВАЗ-2101 сутăнать, хаклă мар. Адрес: Гоголь урамĕ, 19.**

* * *

**1986 çулта туса кăларнă ВАЗ-21013 сутатпăр. Адрес: К.Маркс урамĕ, 1-38, 17 сехет хыççăн.**

* * *

**НГДУ ЖКХ патĕнчи гаража васкавлă сутатпăр. Адрес: Дружба урамĕ, 70-28, телефон - 5-26-02.**

* * *

**УАЗ-452, ЛУАЗ-969 сутатпăр. Телефон: 5-21-54.**

* * *

**Çурта пĕр пӳлĕмлĕ хваттерпе (хушса тӳлесе) улăштаратăп. Гараж, мунча, нӳхреп пур. Адрес: Нефтяниксен урамĕ, 9-14**

* * *

**"Москвич-412" васкавлă сутатпăр, хаклă мар. Телефон: 5-36-69.**

* * *

**10х9 калăпăшлă пура сутăнать, хакĕ калаçса татăлнă тăрăх. Телефонсем: 4-13-78, 2-25-16.**

* * *

**1982 çулта туса кăларнă "Москвич-2140" сутăнать. Хакĕ 5 500 тенкĕ. Телефон: 5-20-04.**

* * *

**Космонавтсен урамĕнчи 19-мĕш номерлĕ çуртăн çурри васкавлă сутăнать. Мунча, нӳхреп пур, шыв кĕртнĕ, пăспа ăшăтмалла. Телефон: 5-18-94.**

* * *

**Геннадий Аркадьевич Беляков ячĕпе панă документсемлĕ пĕчĕк сумкăна тупакана К.Маркс урамĕнчи 9-мĕш номерлĕ çуртри 2-мĕш хваттере пырса пама ыйтатпăр. Парне пулать.**

* * *

**1992 çулхи декабрь уйăхĕнче туса кăларнă ВАЗ-21061 сутатпăр. Андреевка ялĕнче А.Н.Даниловран ыйтса пĕлмелле. Телефон: 39-2-53.**

**Нурлатри хула электросечĕ Нурлат хулинче пурăнакан пенсионерсем электроэнергишĕн укçа тӳлемесĕр расчет тума пултарнине пĕлтерет. Электроэнергишĕн памалли укçана пенсирен тытса юлĕç. Тĕплĕнрех çак адреспа ыйтса пĕлме пулать: Школьная урамĕ, 27. Телефонсем: 2-19-80, 2-12-45.**

**НГЭС администрацийĕ.**

## Пирĕн хăма-чуспа хĕл тĕлне ăнаçлă хатĕрленĕр

**Аксури вăрман хуçалăхĕ хăма-чус (ăвăсран) тăвать тата сутать, пĕр кубла метрĕ - 252 тенкĕ, шăтăрнак, арболит блокĕсем те пур. 6 кубла метр ытла заказ парсан, вăрман хуçалăхĕн транспорчĕпе леçсе параççĕ. Бартер та тума пулать. Аксу поселокĕнче ыйтса пĕлмелли телефон номерĕсем: (344) 2-14-32, 2-11-92.**

**<u>Димитровград хулинчи Промышленная урамĕнчи 89-мĕш номерлĕ çуртри "Согдиана" фирма сĕнет:</u>**

**- силикат кирпĕчĕ - пĕр штукĕ 810 тенкĕ, леçсе парсан - 850 тенкĕ;**

**- керамзит блокĕсем - пĕр штукĕ 3,20 тенкĕ, леçсе парсан - 3,90 тенкĕ. Телефонсем: 3-04-96, 3-27-23.**


Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.
Редактор Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тухарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

ПИРĔН АДРЕС: 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 893. 3218.